Пенси ыйтăвĕсемпе

Ыранхи пенси паян пухăнать

(Вĕçĕ. Пуçл. 1-мĕш стр.).

Хальхи вăхăтра предпринимательсен обязательнăй пенси страхованийĕн палăртнă тӳлев виçи пысăк мар вĕт-ха. Пулас пенси виçине вара ӳстерме май пурри чылайăшне интереслентерме тивĕç. Хальхи вăхăтра чылайăшĕ республика тулашне ĕçлеме çӳрет, ĕç укçине конвертсенче илет, кил хуçи хĕрарăмĕсем те пур халĕ пирĕн. Пулас пенси пирки вĕсен хăйсен тăрăшас пулать.

– Программăна хутшăнакансен налук тӳлес енĕпе çăмăллăхсем пур-и?

– Çапла, гражданселе кун пек чухне социаллă налук тӳлессинчен хăтараççĕ. Сăмахран вăл 12 пин тенкĕрен 1560 тенкĕпе танлашать.

Хăйсен ĕçлекенĕсен хушма пенсийĕ валли хăйсен укçитенкине куçарса паракан предприятисемпе организацисем валли те патшалăх налук тӳлессипе уйрăм çăмăллăхсем пăхса хăварнă. Мĕн чухлĕ укçа куçарса парассине ĕç паракан хăй палăртать, ку йышăнăва приказпа çирĕплетеççĕ тата коллективлă килĕшĕве кĕртсе хăвараççĕ. Куратпăр ĕнтĕ, хăйсен ĕçлекенĕсен пулас пенси виçи мĕн чухлĕ пулассишĕн ĕç паракансен социаллă ответлăхĕ малашне ытларах пулĕ. Квалификациллĕ кадрсем пулччăр тесе шутлакан предприятисем ку мелпе май пур таран анлăрах усă курма тивĕç. Коллектив интересĕсене профсоюз та хӳтĕлеме пултарать.

– Программа енĕпе ытти ыйтусем пулсан, ăçта пыма пулать?

– «Пулăшу линийĕн» 42-59-45 номерлĕ телефонĕпе шăнкăравлама пултаратăр. Кунсăр пуçне Раççей Пенси фончĕн республикăри уйрăмĕн сайтне (www.pfrf.ru) е влаç органĕсен порталĕнчи РФ Пенси фончĕн республикăри уйрăмĕн сайтне (www.cap.ru) кĕрсе пăхма, Пенси фондне пыма пултаратăр – пур ыйту çине те хурав илĕр.

– Патшалăх финансламалли системăпа миçе çын усă курма тытăннă-ха?

– Патшалăх пулас пенсисене финансласси программи октябрĕн 1-мĕшĕнчен вăя кĕчĕ. Çак вăхăтра Раççейĕпе 100 пин çын унта кĕме кăмăл турĕ. Çакна аван тесе палăртрĕ Раççей Президенчĕ Дмитрий Медведев Федераллă Пухăва янă хăйĕн Çырăвĕнче. Кунпа пĕрлех вăл малашне пенси системи пенсипе тивĕçтерессин абстрактлă вăтам кăтартăвĕсемпе кăна çыхăнса тăма пултарайманни пирки те асăнса хăварчĕ. Кашни çыннах хăй пенси çулне çитсен епле пурнăç шайне тивĕç пуласси, патшалăх ăна мĕн чухлĕ гарантилесси, ĕç паракан унăн счечĕ çине обязательнăй взноссем хывнинчен вăл мĕн чухлĕ илесси, хăйĕн мĕн чухлĕ хывма кирли тĕппи-йĕрĕпе паллă пулмалла.

Чăннипех те, пулас пенси пирки паян шухăшламалла. Эпир, пенси службин ĕçченĕсем, çакна аван ăнланатпăр. Эпĕ те, манăн коллегăсем те республикăра чи пĕрремĕшсен шутĕнче пенсисене финансласси программине кĕме заявленисем çырса патăмăр. Патшалăх туса паракан майсемпе усă курас пулать. Май пур таран взноссем кашниех хывма пултарать.

Чăваш Енре те патшалăх пулăшăвĕн программипе усă курас текенсен йышĕ ӳссе пыни савăнтарать. Пĕрремĕш уйăхра кăна 2 пин ытла заявлени панă. Вăл шутран заявленисенчен çуррине ĕç вырăнĕсенчех йышăннă. Ку тĕлĕшпе хăйсен сотрудникĕсене 80 организацире меллĕ майсем туса пама тăрăшнă. Патшалăх пулăшăвĕпе усă курса хăйсен пулас пенсийĕсене ӳстерес текенсен йышĕ куллен ӳссе пырĕ. Паянхи активлă позици вара – ыранхи кун тăнăçлăхĕ.

Елена ИЛЬИНА.

В налоговой инспекции

Грозит ли вам выездная налоговая проверка: оцениваем риски

Выездная налоговая проверка является одним из самых эффективных способов контроля за соблюдением налогоплательщиками, налоговыми агентами и плательщиками сборов законодательства о налогах и сборах Российской Федерации. Теперь у налогоплательщиков появилась возможность самостоятельно оценить, насколько вероятна такая проверка.

Цель налогового контроля заключается в том, чтобы обеспечить своевременное и полное поступление налогов и сборов в бюджет. При этом важно не только выявить налоговые правонарушения, но и предупредить их. Для повышения эффективности налогового контроля Федеральная налоговая служба разработала Концепцию системы планирования выездных налоговых проверок.

Отбор налогоплательщика для проверки происходит на основе анализа финансово-экономических показателей его деятельности. Используются как данные налоговых органов, так и информация из внешних источников (например, Росстата). Налоговые органы для оценки степени риска совершения налогового правонарушения всесторонне анализируют имеющуюся информацию по налогоплательщику.

На основе концепции ФНС России выпустила общедоступные критерии оценки рисков для налогоплательщиков, используемые налоговыми органами при отборе объектов для проведения выездных налоговых проверок.

Теперь налогоплательщики могут самостоятельно оценить, насколько вероятны выездные налоговые проверки. Есть общие для всех налогоплательщиков критерии, а некоторые относятся только к организациям, применяющим общий режим налогообложения (анализируется налог на прибыль). Также разработаны критерии для налогоплательщиков, работающих по специальным налоговым режимам. Одни критерии являются расчетными (для них используются показатели налоговой и бухгалтерской отчетности). Другие основаны на выявлении использования налогоплательщиком так называемых серых схем с целью уклонения от уплаты налогов. Речь идет об анализе договоров с контрагентами.

Для индивидуальных предпринимателей предусмотрен отдельный критерий по налогу на доходы физических лиц, а именно насколько суммы расходов за календарный год приближены к величине доходов по данным декларации. Так, доля профессиональных налоговых вычетов, поименованных в статье 221 НК РФ, в общей сумме доходов не должна превышать за 2007 г. 83%.

Соответствие всех критериев по организации норме свидетельствует об эффективной работе такого предприятия и соблюдении законодательства.

Общедоступными критериями самостоятельной оценки рисков для налогоплательщиков, используемыми налоговыми органами в процессе отбора объектов для проведения выездных налоговых проверок, могут являться:

1. Налоговая нагрузка у данного налогоплательщика ниже ее среднего уровня по хозяйствующим субъектам в конкретной отрасли (виду экономической деятельности).

Налоговая нагрузка рассчитывается как соотношение суммы уплаченных налогов по данным отчетности налоговых органов и оборота (выручки) организаций по данным Федеральной службы государственной статистики (Росстата).

2. Отражение в бухгалтерской или налоговой отчетности убытков на протяжении нескольких налоговых периодов.

3. Отражение в налоговой отчетности значительных сумм налоговых вычетов за определенный период.

4. Опережающий темп роста расходов над темпом роста доходов от реализации товаров (работ, услуг).

5. Выплата среднемесячной заработной платы на одного работника ниже среднего уровня по виду экономической деятельности в субъекте Российской Федерации.

6. Неоднократное приближение к предельному значению установленных Налоговым кодексом Российской Федерации величин показателей, предоставляющих право применять налогоплательщикам специальные налоговые режимы.

7. Отражение индивидуальным предпринимателем суммы расхода, максимально приближенной к сумме его дохода, полученного за календарный год.

8. Построение финансово-хозяйственной деятельности на основе заключения договоров с контрагентами-перекупщиками или посредниками («цепочки контрагентов») без наличия разумных экономических или иных причин (деловой цели).

9. Непредставление налогоплательщиком пояснений на уведомление налогового органа о выявлении несоответствия показателей деятельности.

10. Неоднократное снятие с учета и постановка на учет в налоговых органах налогоплательщика в связи с изменением места нахождения («миграция» между налоговыми органами).

11. Значительное отклонение уровня рентабельности по данным бухгалтерского учета от уровня рентабельности для данной сферы деятельности по данным статистики.

12. Ведение финансово-хозяйственной деятельности с высоким налоговым риском.

Систематическое проведение самостоятельной оценки рисков по результатам своей финансово-хозяйственной деятельности позволит налогоплательщику своевременно оценить налоговые риски и уточнить свои налоговые обязательства.

Таким образом, предлагаемая система планирования позволит:

1) для налогоплательщиков - максимально уменьшить вероятность того, что выездная налоговая проверка в текущем году затронет законопослушного налогоплательщика, полностью исполнившего свои обязательства перед бюджетом;

2) для налоговых органов - выявить наиболее вероятные «зоны риска» (нарушения законодательства о налогах и сборах), своевременно отреагировать на возможное совершение налоговых правонарушений и определить необходимые мероприятия налогового контроля.

Каждый налогоплательщик должен понимать, что от прозрачности его деятельности, полноты исчисления и уплаты налогов в бюджет зависит возможность невключения в план выездных налоговых проверок.

Н.Ю. ОРЛОВА,
начальник отдела камеральных проверок.

Районăмăр маттур çыннисем

«Район председательне» районĕпех пĕлеççĕ

Паянхи ватăсем иртнĕ йывăр пурнăçа куç умне кăларнă чух вăрçă çулĕсенчи ним çиме çук вăхăтсене чĕрене ыраттарса аса илеççĕ. В.С. Краснов Катькасра çителĕклĕ пурнăçпа пурăнакансен çемйинче çуралнă пулсан та (ашшĕпе амăшне раскулачить тунă), выçлăх мĕнне лайăх пĕлет. Шупашкарти 1-мĕш номерлĕ профтехучилищĕне пĕтернĕ хыççăн 1957-1958 çулсенче Киряри вăрман заводĕнче, Шупашкарти «Сельэлектростройра» электромонтерта ĕçленĕ чух та çăкăр çитĕнтеренкен пулас ĕмĕт пуçĕнчен тухмасть.

–Питĕ çиес килетчĕ, – çак сăмахсем çемьери 12–мĕш ача тăраниччен çисе курнăран тухмаççĕ пулĕ.

1958 çулта ĕмĕтленнĕ ĕмĕте пурнăçа кĕртме пуçлать Валериан: Чăваш ял хуçалăх институтне вĕренме кĕрет. Унтан тепĕр 5 çултан ученăй-агроном пулса тухать.

Пĕчĕк чух амăшĕ «характеру сан ытлашшипех» тени çамрăк специалиста тӳрех кирлĕ пулса тухать.

Алла професси илнĕ хыççăн «Юринский» совхозра агроном пулса ĕçлерĕ. Нумайлăха мар. Паянхи пекех астăвать-ха Валериан Семенович ун чух «Колос» хуçалăх ертӳçи пулса ĕçлекен пиччĕшĕн Л.М. Волковăн сăмахĕсене:

– «Передовик» хуçалăха ура çине тăратас пулать. Ман характер пур, санăн та вăл çителĕклех. Кирлĕ пулсан, пулăшатăп, –терĕ лешĕ.

1964 çулччĕ ун чух. Саланса каяс патнех çитнĕ «Передовик» колхоз председателĕн В.С. Красновăн ун чух чи пĕрремĕш принцип çынсене хисеплесси пулнă. Чи малтанах вăл ĕç укçине йĕркеллĕ парса тăма пуçлать: ĕç минимумне тултарнă пĕр ĕç кунĕшĕн 40 пус тӳлет. Енчен те ĕç минимумне тултараймасан, пĕр кун ĕçленĕшĕн – 20 пус. Рыккакассипе Пушкар, Эхветкассипе Çĕлеменкассинче пурăнакан аслăрах ăрури çынсем ун чух Валериан Семенович хура лашапа ялтан яла çӳренине лайăх астăваççĕ. Ĕç нумай, пур çĕре те çитес пулать. Мăшăрĕн ашшĕ çĕлетсе панă тăлăппа нимле шартлама сивĕ те хăрушă марччĕ уй урлă каçнă чух Шомикра пурăнакан В.С. Краснова. Вăл ертсе пынипе «Передовикра» республикăра чи пĕрремĕш 120 пуç вырнаçмалăх ĕне сарайĕ туса лартрĕç. Районта чи пĕрремĕш Эстонирен хура-ула ĕнесене илсе килчĕç. Малтан кунне 2 бидон сĕт сунă пулсан, 3 çултан кунне пĕрер машина сĕт каятчĕ кунтан.

Вăл вăхăтра «Передовиксем» хулана кунне 5 машина çĕр улми ăсататчĕç. Иккĕмĕш çăкăра ун чух алăпа кăларнă. Тухăç 200 центнерпа танлашатчĕ.

– Пуçра ун чух пĕр шухăшчĕ – халăха ура çине тăратасси, – аса илет çав вăхăтсене паян Валериан Семенович.

Пултаруллă çамрăк председателе тӳрех асăрхарĕç районта. 1969 çулта «Передовикпа» «Ленинский путь» колхозсене пĕрлештерсен, ертӳçине кама лартассипе пуç ватмарĕç. В.С. Красновран лайăх кандидатура пулмарĕ. Ĕçĕ вара кунта вĕресе çеç тăчĕ, фермăсене реконструкцилеме пуçларĕç. Сĕт туса илесси палăрмаллах хăпарса кайрĕ. Ку енĕпе вĕсем районта малта пыракан «Сеятель» хуçалăха хăваласа çитсе иртсе кайрĕç.

Çитĕнӳ сăлтавне вара Валериан Семенович акă мĕнре куратчĕ:

– Характер çирĕпехчĕ çав ман. Тата çамрăксене ĕçе илме тăрăшаттăм. Пĕтĕм вăй çав пултаруллă кадрсенче пулнă.

Çак вăхăтсенче вара Валериан Семенович сыснасен Эстонири ăратне ĕрчетме пуçлать. Кĕтӳсене çӳретессипе нумай ĕçлетчĕç. Результачĕ куç умĕнчехчĕ.

– Çулла сĕте ниçта хума çукчĕ, – сĕт нумай суса илнине çапла хаклать паян В.С. Краснов.

1974 çулта çĕр улми тухăçĕ те 274 центнерпа танлашрĕ. Çав çулах ăна районти ял хуçалăх управленине ертсе пыма шанчĕç. Çĕнĕ шăпăр çĕнĕлле шăлать тенĕ евĕр, В.С. Краснов тӳрех çĕр улми кăларассине механизацилессипе ĕçлерĕ. Çĕр улмие лартасси, агротехника мероприятийĕсене ирттересси, кăларасси – йăлтах комбайнпа пулма пуçларĕ. Районĕпе 26 пин тонна çĕр улми туса илетчĕç ун чух.

Унтан Валериан Семенович сыснасене тăрантарассинче йĕрке тума пуçларĕ: комбикорм ун чухне пулман, выльăхсене вара ытларах ӳт хуштарас килетчĕ. Сыснасене пĕр пек пайсемпе пăрça, урпа, сĕлĕ пама пуçларĕç. Вĕсенчен хăшĕ те пĕри пулмасан, ытти пучахлă культурăсене хушатчĕç. Çак вăхăтра сыснасене шыв ĕçтерме пуçларĕç.

– Çав тери йывăр пулчĕ çаксене пурнăçа кĕртме. Анчах результачĕ нумай кĕттермерĕ: сыснасем талăксерен 300-шер грамм ӳт хушма пуçларĕç, – аса илет паян 70 çул тултаракан Валерин Семенович.

Çав вăхăтра районта комбикорм тăвакан цех туса лартрĕç. Çулталăкне 18 пин тонна комбикорм тăватчĕç кунта. Сыснасен ӳтхушаслăхĕпе Муркашсем республикăра чи малтаччĕ, кăтарту 450-550 грампа танлашатчĕ.

Пултарулăхне кура В.С. Краснов служба картлашкипе çӳлерех те çӳлерех хăпарма пуçларĕ. 1976 çулта ăна райĕçтăвком председательне лартаççĕ. Шăп тепĕр виç çултан В.С. Краснов КПСС райкомĕн 1 секретарĕ пулса тăрать.

Кашни ирех вăл хуçалăхсене ирхи сăвăм вăхăтĕнче çитетчĕ.

– Контроль çӳллĕ шайраччĕ, – куç умне кăларать çав вăхăта юбиляр.

Халăхра ăна шӳтлесе «район председателĕ» тетчĕç. «Передовикра» чух «Ударникра» мĕн пулнине пĕлсе тăратчĕ. Çав вăхăтра районти мĕн пур ĕç унăн куçĕ умĕнчех пулнă. Вăл е ку ертӳçĕне района чĕнтерсен вара лешсем пĕлсех тăнă: Валериан Семенович ахальтен чĕнмест хăй патне.

Валериан Семенович КПСС райкомĕн 1 секретарĕнче ĕçленĕ чух ĕнтĕ районта нумай çулсем турĕç. Шкулсем тума пуçларĕç. Пĕр çулта 5 шкулпа 2 ача сачĕ çĕкленсе ларчĕ. 3-4 çул хушшинче 8 врач амбулаторине турĕç. Пур çĕрте те тĕп усадьбăсене туса çитерчĕç.

Электромонтертан пуçласа ял хуçалăх министрне çитрĕ В.С. Краснов. Ун хыççăн вара 1991 çултан пуçласа 2000 çулччен Муркашри чăх-чĕп фабрикине ертсе пычĕ.

В.С. Красновăн ĕçне çĕр-шывăмăр пысăка хурса хакларĕ. «Ĕçри паттăрлăхшăн» медаль те, «Хисеп палли» орденпа Ĕçлĕх Хĕрлĕ Ялав орденĕ те, ытти наградăсем те пур унăн. Вĕсенчен те хаклăраххи вара – çемйи.

–Ун пек ытарайми илемлĕ хĕрарăм курман эпĕ, – тет хăйĕн мăшăрĕ Римма Николаевна пирки. Мĕн чухлĕ каçарчĕ пулĕ вăл мана... – ăшшăн калаçать юбиляр. Икĕ ывăлĕпе (пĕри Чăваш Республикин Президент администрацийĕнче, тепри район администрацийĕнче ĕçлет) вĕсен çемйисем, икĕ мăнукĕ – пурнăçри чи пысăк та хаклă парнесем уншăн. Тата Валериан Семенович Муркаш район халăхне юратать:

–Тĕлĕнмелле пултаруллă çынсем вĕсем, – тет Валериан Семенович.

Хăйĕн пурнăçĕпе вара вăл çав тери кăмăллă.

– Пурнăç мана мĕн памаллине йăлтах пачĕ, хам та унран мĕн кирлине веçех илтĕм, – юбиляр çак сăмахĕсем вăл чăннипех те пурнăçа юратнине, унта вăл хăйĕн вырăнне тупнине кăтартса парать.

Район администрацийĕ те Валериан Семеновича 70 çул тултарнă ятпа саламлать. Район аталанăвĕшĕн ырми-канми ĕçленĕшĕн тав тăвать. Малашнехи пурнăçра çирĕп сывлăхпа мĕн пур ыррине сунать.

Л.ПАВЛОВА.